27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
МАРТ
24
ШАМАТКУН
56(1807) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Партиллĕ-организациллĕ ĕçе малалла лайăхлатса пырассишĕн

Совет Союзĕнчи ĕçсынисем Ленин-Сталин партине кĕрешÿре тĕрĕсленнĕ хăйсен шанчăклă çулпуçĕ вырăнне хурса, гитлерла Германие çапса аркатса тăтăклă çĕнтерÿ тăвас ĕçе хавхалантаракане тата организацилекенĕ вырăнне хурса хисеплеççĕ. Вăрçă кунĕсенче совет çыннисем большевиксен партийĕ тавра тата та тачăнрах пĕтĕçсе тăчĕç.

Малта пыракан çынсем партие енне туртĕнасси халĕ нихăçанхинчен те ытларах ÿсрĕ. Вăрçăн юлашки виçĕ çулĕ хушшинче кăна Чăваш республикинчи парторганизаци ретне çĕнĕрен 11.270 çынна илнĕ. Партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçĕн пахалăхĕ ÿсрĕ. Ертсе пыракан кадрсене суйласа илсе вырнаçтарса тухас тата вĕрентсе çитĕнтерес тĕлĕшпе сахал мар ĕçсем тунă. Хĕрлĕ Çара кайнă юлташсем вырăнне ертсе пырас ĕçе Ленин-Сталин партийĕн ĕçне чĕререн парăннă, пултаруллă çынсене уйăрса лартнă. Партипе совет тата хуçалăх ĕçĕсенче ĕçлекен кадрсен идейăпа политика тата пĕтĕмĕшлĕ пĕлĕвĕсен шайне ÿстерес тĕлĕшпе хуласемпе районсенче каçхине ĕçлекен парти шкулĕсем 33 шкул тата пуçламĕш парторганизацисем çумĕнче 250 политшкул уçнă.

Çакăнпа пĕрлех, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XXI-мĕш пленумĕ палăртнă тăрăх, облаçри парторганизацин партиллĕ-организациллĕ ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем те пур-ха.

Партин уйрăм горкомĕсемпе райкомĕсем хăйсен практикăллă ĕçĕнче хуçалăх ыйтăвĕсене ертсе пырассине партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçсемпе çыхăнтарса пымаççĕ. Нумай горкомсемпе райкомсем пуçламĕш парторганизацисене куллен пулăшу парса тăмаççĕ, вĕсене пĕтĕмĕшлĕн ертсе пыраççĕ, хуçалăхпа политикăллă мероприятисене пурнăçа кĕртес ĕçре вĕсен ответлăхне ÿстерессишĕн çителĕксĕр тăрăшаççĕ. Пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсене вĕрентсе çитĕнтерес тĕрĕшпе сÿрĕк ĕçлеççĕ; вĕсемпе семинарсем тата канашлусем сайра-хутра кăна туса ирттереççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн XXI-мĕш пленумĕ хăйĕн решенийĕнче çакна палăртрĕ: партин хăшпĕр горкомĕсемпе райкомĕсем парторганизацисен йышне лайăхлатасси çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ, ертсе пыракан профессисемпе ĕçлекен рабочисене, малта пыракан колхозниксемпе трактористсене парти ретне сахал илеççĕ. Çапла, сăмахран, партин Сĕнтĕрвăрри райкомĕ 1944 çулта парти ретне 15 колхознике кăна илнĕ, Йĕпреçпе Çĕмĕрле райкомĕсем çав вăхăт хушшинче партие пĕр тракториста та илмен. Облаçри парторганизацире 1944 çулта ВКП(б) ретне илнисен шутĕнче рабочисен йышĕ—13,4 процент, колхозниксен йышĕ—28,7 процент, трактористсемпе комбайнерсем—3,5 процент кăна шутланаççĕ. Пленум уйрăмăнах çакна палăртрĕ: уйрăм парторганизацисем партие илнĕ чухне час-часах пысăк йăнăшсем тăваççĕ, парти ретне илекенсенчен мĕн ыйтма тивĕçлине çителĕксĕр ыйтаççĕ, хăшпĕр чухне çынсене суйламасăр, ушкăнăн-ушкăнăн парти ретне илеççĕ, çапла вара партие уйрăмшарăн суйласа илмелли ленинла-сталинла принципа пăсаççĕ. Çамрăк коммунистсене вĕрентсе çитĕнтерес ĕçе чылай çĕрте япăх туса пыраççĕ. 1945 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне облаçри парторганизацире пĕтĕм кандидатсен 42 проценчĕн кандидатра тăмалли стажсем иртсе кайнă. Стаж иртсе кайнă кандидатсен йышĕ уйрăмах Шупашкар, Улатăр, Хĕрлĕ Чутай тата Тăвай районĕсенчи парторганизацисенче пысăк. Парти пухăвĕсенче партин шалти пурнăçĕпе çыхăннă ыйтусене çителĕксĕр лартса сÿтсе яваççĕ. Парторганизацисем чылай çĕрте парти пухăвĕсене коммунистсене большевикла воспитани памалли шкул туса хуман.

Парти пухăвĕсенче йышăннă решенисене тата партин çÿлте тăракан органĕсен решенийĕсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслесе тăрассине тивĕçлĕ пек йĕркелемен. Партипе совет тата хуçалăх организацийĕсенчи çитменлĕхсене критиклессине тата самокритикăна çителĕксĕр сарнă.

Пленумра пулнисем çакна та тĕрĕс палăртрĕç: районсенче нумаях пулмасть пулса иртнĕ парти пухăвĕсемпе конференцисенче чылай çĕрте критикăпа самокритикăна пачах та çителĕксĕр сарнă пулнă. Партин хуласемпе районсенчи организацийĕсенче коммунистсене шута илес, парти документчĕсене çырса йĕркелес тата вĕсене сыхласа усрас ĕçре, çавăн пекех член укçи пухас ĕçре те пысăк çитменлĕхсем пур. Çакă вăл уйрăмах партин Улатăр хула комитетĕнче, Чурачăкпа Куславкка райкомĕсенче палăрать.

Партин чылай горкомĕсемпе райкомĕсем комсомол организацийĕсене сÿрĕк ертсе пыраççĕ, комсомол организацийĕсен йышне ÿстерессишĕн, вĕсене организацилĕх тĕлĕшĕнчен çирĕплетессишĕн сахал тăрăшаççĕ, комсомолăн ертсе пыракан кадрĕсене суйласа илессипе вĕрентсе çитересси çине, комсомолецсемпе çамрăксене политикăллă воспитани парасси тата вĕсен производствăри активлăхне ÿстерессси çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхмаççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн XXI-мĕш пленумĕ Обком бюровне партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçсенчи çитменлĕхсене пĕтерме, мĕнпур парторганизацисен ĕçпе кĕрешÿри пултарулăхне татах та çÿлерех хăпартма, партипе правительствăн директивисене пурнăçа кĕртес ĕçре партипе совет тата хуçалăх органĕсенчи ертсе пыракан кадрсен ответлăхне тăтăшах ÿстерсе пыма хушса хăварчĕ. Пленум парти горкомĕсемпе райкомĕсене пуçламĕш парторганизацисене ертсе пырассине лайăхлатма, парти пухăвĕсене тĕплĕн хатĕрленсе йĕркеллĕ ирттермелле тума, çав пухусенче ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пулăшакан критикăпа самокритикăна пур енĕпе те сарса пыма хушрĕ.

Пирĕн парти органĕсем парти речĕсене ÿстерсе çирĕплетессишĕн куллен тăрăшма тивĕçлĕ. Çак ĕçре партие илекенсен йышĕн пахалăхне ÿстересси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла, партие уйрăмшарăн суйласа илмелли принципа çирĕп тытса пымалла. Çамрăк коммунистсене вĕрентсе çитĕнтерес тĕлĕшпе тăтăшах ĕçлес пулать. Кандидатра тăмалли стаж кандидатсемшĕн чăн-чăн большевикла воспитани шкулĕ, вĕсен ĕçпе политика тĕлĕшĕнчи пахалăхне пур енĕпе те тĕрĕслемелли шкул пулса тăтăр. Коммунистсен идейăпа политикăллă шайне ÿстерес тĕлĕшпе тимлĕнрех ĕçлемелле, партин каçхи шкулĕсемпе политшкулсен ĕçне лайăхлатмалла, парти историне тата большевикла партин теорине харпăрхăй тĕллĕн вĕренекен коммунистсене куллен пулăшмалла.

Пленум парти горкомĕсемпе райкомĕсене ертсе пыракан кадрсене суйласа илсе ĕçе вырнаçтарса тухассине йĕркене кĕртме хушрĕ.

ВКП(б) Обкомĕн XXI-мĕш пленумĕ парти горкомĕсемпе райкомĕсен секретарĕсене комсомол организацийĕсене ертсе пырассине тĕпренех лайăхлатма, ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене пурнăçа кĕртес, мĕнпур комсомол ĕçне йĕркелес тĕлĕшпе ВЛКСМ горкомĕсемпе райкомĕсене практикăллă пулăшу парса тăма хушрĕ.

Вăрçă кунĕсенче советпа профсоюз органĕсем умне ответлă задачăсем лартнă. Çавăнпа та парти горкомĕсемпе райкомĕсен совет тата профсоюз ĕçне ертсе пырассине вăйлатмалла.

Парти горкомĕсемпе райкомĕсем, çавăн пекех пуçламĕш парторганизацисем те предприятисемпе транспортра, колхозсемпе МТС-сенче партиллĕ-политикăллă ĕçе пур енĕпе те лайăхлатма тивĕçлĕ. Ертсе пыракан работниксем ĕçсынисем умĕнче политика ыйтăвĕсемпе докладсем туса парассине йĕркелес пулать, ĕçсынисене фронтри ĕçсем çинчен, ССР Союзĕн тулашри тата шалти лару-тăрăвĕ çинчен вăхăтра пĕлтерсе тăрас пулать.

Пирĕн тивĕç—партиллĕ-политикăллă тата партиллĕ-организациллĕ ĕçĕн виçине пур енĕпе те ÿстересси, çак никĕс çинче вара пирĕн умма паттăр Хĕрлĕ Çара малалла вăйлăнрах пулăшас тĕлĕшпе лартнă задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртесси пулса тăрать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 22-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 22-мĕшĕнче КЕНИГСБЕРГ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем ХАЙЛИГЕНБАЙЛЬ хули районĕнче ФРИШ ГАФ заливĕ хĕррине хĕстерсе лартнă тăшман группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă, МЮКЮНЕН, ГАБДИТТЕН, ШИРТЕН, ГЕНРИХСХОФ, ГЕЛЕНЕНХОФ ялĕсене туртса илнĕ. Мартăн 21-мĕшĕнче ку районра фронт çарĕсем 800 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

ДАНЦИГ хули енче пирĕн çарсем çапăçса наступлени туса пынă, КРИФКОЛ, ГЮТТЛАНД, ХОХЕНШТАЙН, ШЕНВАРЛИНГ, КЛАЙН КЛЕШКАУ, РУССОШИН, БАНГШИН, ЛЕЕСЕН, ВЕЛЬТЦЕНДОРФ ялĕсене туртса илнĕ. Мартăн 21-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче ку районра 500 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем ОППЕЛЬН хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра тăшман оборонине татнă та кашни енелле 40 километр малалла кайнă, НОЙШТАДТ хули районĕнче пĕрлешсе, нимĕç çарĕсен ОППЕЛЬН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри ушкăнне çавăрса илнĕ те аркатса тăкнă.

Фронт çарĕсем кунти çапăçусенче 15.000 нимĕç салтакĕпе офицерне çити тыткăна илнĕ тата çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: самолетсем—21, танксемпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем—57, тупăсем—464, пулеметсем—1.000 ытла, винтовкăсемпе автоматсем—13.000 ытла, автомашинăсем—3.000, паровозсем—27, вагонсем—1.520, лашасем—5.000, боеприпас, снаряжени тата апат-çимĕç склачĕсем—75. Тăшманăн вилнисене кăна шута илсен те, 30.000 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

Наступлени туса пырса, фронт çарĕсем нимĕç Силезийĕнчи НОЙШТАДТ, КОЗЕЛЬ, ШТЕЙНАУ, ЗЮЛЬЦ, КРАППИТЦ, ОБЕР-ГЛОГАУ, ФАЛЬКЕНБЕРГ хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 400 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ЛОРЕНЦБЕРГ, АРНСДОРФ, ШТРИГЕНДОРФ, КОШМАЛЬЦ, ЗАЙФЕРСДОРФ, ШТЕФАНСДОРФ, ГРОСС-НОЙДОРФ, ХЕРМСДОРФ, ФОЛЬКМАННСДОРФ, ДИТТЕРСДОРФ, ШТОЙБЕНДОРФ, ЗАБШЮТЦ, ГРЕБНИГ, МАТЦКИРХ, ШВЕРФЕЛЬДЕ, ГРЕГОРСДОРФ ятлă пысăк ялсем.

Чехословакире ЗВОЛЕН хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата çурçĕртерехре, пирĕн çарсем, Карпат тăвĕсен тăрăхĕнчи сăртлă-вăрманлă вырăнти йывăр условисенче çапăçса, халăх пурăнакан 40 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ПРЕДАЙНА, ЛУБЕТОВА, ДУБРАВИЦА, ЧЕРИН, БАДИН, СЕЛЬНИЦА, ГАЙНИКИ ятлă пысăк ялсем.

ДРАВА шывĕн анат тăрăхĕнчи районра, ОСИЕК хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, нимĕç çарĕсем икĕ тĕлте ДРАВА шывĕ урлă каçнă та хăйсен плацдармĕсене аслăлатма хăтланнă. Болгарипе Югослави армийĕсен çарĕсем, пирĕн çарсемпе пĕрле кĕрешсе, нимĕç çарĕсен шыв урлă каçнă чаçĕсене хăйсене хирĕç татăклăн пыра-пыра çапнă та аркатса тăкнă, вĕсен юлашкийĕсене Драва шывĕн кăнтăр енне хăваласа янă.

Мартăн 21-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 89 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 51 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆

ПИРЕН АВИАЦИ ВЕНГРИРИ ВЕСПРЕМ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛНЕ ПЫРСА ТАПАННИ

Мартăн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн йывăр бомбардировщиксем Венгрири Веспрем чугун çул узелне пырса çапнă. Бомбăсем пăрахнине пула, чугун çул узелĕнче пушарсем тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

☆ ☆

Кенигсберг хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем нимĕçсен Хĕвелтухăç Пруссири группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, совет чаçĕсем Хайлингенбайль хулинчен виçĕ километр хĕвелтухăçнерехре ларакан Ширтен ятлă тĕреклетнĕ пункта туртса илнĕ. Тăшман Хайлигенбайль хулине тем пулсан та хăй аллинчех тытса хăварма тăрăшать, мĕншĕн тесен, ку хула тинĕс хĕрринчи Розенберг ялне хÿтĕлесе тăрать, çав ял çумĕнче суднăсем пырса чарăнмалли вырăн тунă. Нимĕçсем Хайлигенбайль хулине хÿтĕлеме малтанах хатĕрлесе хунă. Хула патне пымалли вырăнсенче тăтăшах траншейăсем алтнă тата минăсем лартса тухнă. Енер хула патне кăнтăр енчен пырса çитнĕ пирĕн чаçсем паян хаяррăн çапăçнă хыççăн Иарфт шывĕн кăнтăр хĕрринчи казармăсемпе çуртсен пĕр ушкăнне туртса илнĕ. Унтан совет боецĕсем кăкăр таран пăрлă шыва кĕрсе кайса Иарфт шывĕ урлă каçнă та çав шывăн çурçĕр хĕрринче темиçе çурт туртса илнĕ. Кун каçиччен совет çарĕсем 2.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 16 танкпа хăй тĕллĕн çÿрекен тупă, 10 бронетранспортер, 48 хир туппи тата 400 автомашинăна çити пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн бомбардировщиксем тата штурмовиксемпе истребительсем нимĕçсен артиллери позицийĕсене, тĕреклетнĕ пункчĕсене, пристанĕсене, причалĕсене, çавăн пекех тата тăшманăн Фриш Гаф заливĕнчи суднисене атакăлаççĕ.

* * *

Данциг хули енче пирĕн çарсем, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Нимĕçсем, контратакăсем туса, хирти тупăсемпе тата çар карапĕсем çинчи тупăсемпе вăйлăн персе тăрса, совет чаçĕсене Данциг бухти хĕрринелле пыма чарма тăрăшаççĕ. Пирĕн Висла шывĕн хĕвеланăç хĕррипе наступлени туса пыракан çарсем нимĕçсене çулсен паха узелĕ пулса тăракан Гютлагда ялĕнчен сирпĕтсе кăларнă. Тепĕр участокра çав пырăнти чи çÿллĕ вырăншăн хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Çав çÿллĕ вырăнта тăшман тимĕрпе бетонран дотсем туса хунă, çĕрайĕн çÿремелли çулсем чавса тунă. Пирĕн боецсем çав çÿллĕ вырăнтан кăнтăр енĕпе иртсе кайнă та нимĕçсен оборонин çав вăйлă тĕреклетнĕ пунктне штурмласа туртса илнĕ. Тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, совет чаçĕсем çавăн пекех тата Гдыня хулинчен 4 километр хĕвеланăçнерехре ларакан Вельтценорф ялне туртса илнĕ. Пирĕн подразделенисем тăшман бронепоездне тытса илнĕ. Бронепоезд командине тыткăна илнĕ.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем наступлени пуçласа янă. Вăйлă çапăçнă хыççăн совет чаçĕсем Оппельн хулинчен хĕвеланăçнерехре тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă. Татса кĕнĕ вырăна пирĕн çăмăллăн куçса çÿрекен соединенисем кĕрсе кайнă. Пирĕн çарсен пырса çапакан ушкăнĕ, çав тери хăвăрт малалла кайса, Фалькенберг хулине туртса илнĕ, 2.000 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Часах нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕ тата шоссе çулĕсен узелĕ пулса тăракан Ламсдорф ялне туртса илнĕ. Ку ялта пирĕн боецсем фашистсен каторгинчен 4.000 совет гражданне ытла ирĕке кăларнă. Çитĕнĕве малалла вăйлатса пырса, пирĕн çарсем Нойштадт хули патне пырса тухнă. Хула урамĕсенче çĕрĕпех хаяр çапăçусем пынă. Ир енне Нойштадт хулине гитлеровецсенчен тасатса пĕтернĕ. Нойштадтра трофейсем нумай тытса илнĕ, вăл шутра—çар пурлăхĕн склачĕсем. Çав вăхăтра пирĕн Одер шывĕн хĕвеланăç хĕрринче Оппельн хулинчен кăнтăртарахри плацдарма тытса тăракан чаçсем нимĕçсен хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та Обер-Глогау хулине туртса илнĕ. Пирĕн Оппельн хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра наступлени туса пыракан çарсем, тăшмана пĕтерсе пырса, Нойштадт хули районĕнче пĕр-пĕринпе пĕрлешнĕ. Çапла вара, нимĕç çарĕсен Оппельн хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри ушкăнне çавăрса илнĕ. Тупăсемпе тата минометсемпе вĕçĕмсĕр персе тăрса, тăшмана питех те пысăк çухатусем кÿнĕ. Советсен танковăй соединенийĕсем çав тери вăйлăн пыра-пыра çапса, хупăрласа илнĕ тăшман группировкине темиçе пая уйăрса пăрахнă. Пирĕн çарсем ăста та татăклăн çапăçни тăшмана пачах йĕркерен кăларнă. Нимĕçсем хăйсен хупăрласа илнĕ группировкине пулăшма хăтланнă, анчах та ку ĕçрен вĕсен нимĕн те тухман. Совет пехотинецĕсем тата танкистсемпе артиллеристсем тăшман контратакисене сирсе янă, çавăнпа пĕр вăхăтрах хупăрласа илнĕ нимĕçсен чаçĕсене пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Гитлеровецсем хирĕç тăнине пирĕн çарсем çĕмĕрсе тăкнă. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем ушкăнĕ-ушкăнĕпе тыткăна парăнма тытăннă. Пирĕн çарсем тăшман хирĕç тăракан юлашки вырăнсене пусарса лартнă та хупăрласа илнĕ нимĕç çарĕсен ушкăнне пуçĕпех аркатса тăкнă. Çапăçу вырăнĕсенче гитлеровецсен виллисем пинĕ-пинĕпе выртса юлнă. Унти çапăçусенче нимĕçсен 200 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине, 62 бронетранспортерне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, темиçе çĕр тупă, темиçе çĕр миномет тата ытти хĕçпăшал та нумай пĕтерсе тăкнă.

Çуракине хатĕрленсе ирттерессси çинчен

(ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ И. М. ЧАРЫКОВ юлташ Чăваш республикинчи ялхуçалăх работникĕсен канашлăвĕнче тунă докладран)

Октябрьти Социализмлă Аслă революци 27 çул тултарни çинчен тунă хăйĕн историллĕ докладĕнче Сталин юлташ колхоз хресченĕсен ĕçне пысăк хак пачĕ. «Хĕрлĕ Çар,—терĕ Сталин юлташ.—вăрçăн тăваттăмĕш çулĕнче, колхоз хресченĕсем тăрăшнине пула, апат-çимĕç çитменнине курмасть. Колхозниксемпе колхозницăсем — рабочисемпе интеллигенцие апат-çимĕç, промышленноçа вара—чĕртавар парса тăраççĕ, фронт валли хĕçпăшалсемпе снаряжени туса кăларакан заводсемпе фабрикăсене йĕркеллĕ ĕçлеме май параççĕ. Пирĕн колхоз хресченĕсем, тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне пĕтĕмĕшпех ăнланса тăрса, тăшмана çĕнтерес ĕçре Хĕрлĕ Çара активлăн пулăшаççĕ».

Чăваш республикинчи колхозсем 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене организованно туса ирттерчĕç, государствăна тырпул пĕтĕмĕшпех парса татрĕç, Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе 641 пин пăт тĕштырă тата 688 пин пăт çĕрулми пачĕç. Çак çитĕнÿсене пирĕн ялхуçалăхĕ колхоз хресченĕсен ĕçри активлăхĕ ÿснине пула тума пултарчĕ.

Анчах пирĕн хăшпĕр районсем, сăмахран, Кувакино, Пăрачкав, Шăмăршă, Чкаловски, Хĕрлĕ Чутай, Первомайски, Улатăр тата Çĕмĕрле районĕсем, 1944 çулта ялхуçалăх ĕçĕсен планне тултараймарĕç, уйхир ĕçĕсене начар пахалăхпа туса ирттерчĕç тата тырпул тухăçлăхне ÿстерес, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парас тĕлĕшпе хăйсен заданийĕсене пурнăçа кĕртеймерĕç.

Ялхуçалăхне малалла аталантарса пырас тесе, çĕрĕç органĕсен руководителĕсен ялхуçалăхне çавăрăнăçуллăнрах, конкретнăрах ертсе пымалла, кашни колхозăн, совхозпа МТС-ăн уйрăмлăхĕсене тĕплĕн шута илсе тата вĕсен экономикине лайăх пĕлсе ертсе пымалла.

Социализмлă çĕрĕçне малалла вăйлатса пырас тĕлĕшпе ĕçлемелли боевой программа вăл—ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ ялхуçалăхне аталантармалли 1945 çулхи план çинчен тата тĕштырă культурисен вăрлăхне туса илес ĕçе лайăхлатасси çинчен йышăннă решенисем пулса тăраççĕ. Ялхуçалăх ĕçĕсен 1945 çулхи планне пурнăçа кĕртнĕ чухне тырпул тухăçлăхне пур майсемпе те ÿстерессси, туса илнĕ тырпулăн т. ыт. ялхуçалăх культурисен пĕтĕм хисепне ÿстерессси чи пысăк задача пулса тăрать. Çакна вара çĕрĕçĕнчи культурăна çĕклесен кăна, мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсен пахалăхне лайăхлатсан тата вĕсене вăхăтра туса ирттерсен кăна пурнăçа кĕртме пулать. Çуракине хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе ĕçленĕ чухне çакна яланах асра тытас пулать.

Килес çуракине ирттерме эпир мĕнле хатĕрленетпĕр-ха?

Вăрлăх хатĕрлесси

Вăрлăх—килес çулхи тырпулăн ылттăн фончĕ пулса тăрать. Кашни колхозăнах çĕрĕçне ытларах та ытларах вăйлатса пыма кирлĕ чухлĕ вăрлăх фончĕ пулмалла.

Вăрлăх хуçалăхне йĕркелесе ярас тĕлĕшпе иртнĕ çулта чылай пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Вăрлăх участокĕсенче самаях пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ. Çакна пула республикăри колхозсем кăçал тĕштырăсен вăрлăхне пĕлтĕрхинчен 63 пин центнер чухлĕ ытларах тата тĕрĕссипе кирлинчен 58 пин центнер ытларах хывса хăварчĕç. Кунсăр пуçне, 15.602 центнер вăрлăх страховой фондсенче пур.

Анчах уйрăм районсемпе колхозсем хăйсене кирлĕ чухлĕ вăрлăх хатĕрлеймерĕç. Çапла, сăмахран, Пăрачкав районĕнче государство панă плана пурнăçа кĕртме тĕштырă культурисен вăрлăхĕсем 35,5 процент, Кувакино районĕнче 23,2 процент, Шăмăршă районĕнче 10 процент чухлĕ çитмеççĕ. Çавăн пекех Çĕмĕрле, Первомайски, Чкаловски районсен те тата ытти районсенчи хăшпĕр колхозсен те тĕштырă культурисен вăрлăхĕсем çитмеççĕ. Асăннă районсенчи çĕрĕç органĕсем, агрономсемпе колхоз председателĕсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ вăрлăх участокĕсем пирки йышăннă постановление тата ку тĕлĕшпе ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ А. А. Андреев юлташ кăларнă приказа пурнăçа кĕртмен. Вĕсем вăрлăх участокĕсенче тырпула чи лайăх срокcенче тата пысăк пахалăхпа акса хăвараймам, кайран тата калчасене тивĕçлипе пăхса ÿстерес ĕçе организацилемен. Çавна пула вăл районсенче вăрлăх участокĕсен тухăçлăхĕ питĕ начар пулчĕ. Çав вăхăтрах республикăри малта пыракан ялхуçалăх артелĕсем вăрлăх участокĕсенче кашни гектартан 15—26 центнер таран тĕштырă туса илчĕç. Пăрачкав, Кувакино, Шăмăршă, Первомайски, Чкаловски тата ытти районсенчи колхозсен йăнăшне республикăри пур колхозсен те шута илес пулать. Вăрлăх туса илес ĕç çине кăçал тимлĕн çавăрăнса пăхас пулать.

Пур культурăсен вăрлăхĕсене те çителĕклĕ таран тупса хурас тĕлĕшпе халь кашни районпа колхозăн татăклă мерăсем йышăнмалла. Çак тĕлĕшпе шалти мĕнпур ресурссене мобилизацилемелле, колхозсемпе колхозниксен запасĕсенчен вăрлăх кивçен илмелле. Пирĕн хăшпĕр юлташсем çав ĕçе тума ÿркенеççĕ, вĕсем вăрлăхсене государствăран е ытти районсенчи колхозсенчен илме пăхаççĕ, хăйсен районĕсенче пĕр колхоз теприне пулăшас ĕçе организацилемеççĕ. Çапла туни вăл тĕрĕс мар, кашни районпа колхозрах шалти ресурссене вĕçне çитиччен мобилизацилемелле.

Уйрăм районсенче кондициллĕ мар вăрлăхсем нумай. Правительство çав кондициллĕ мар тата сортлă мар вăрлăхсене Заготзерно пункчĕсене сортлă тата кондициллĕ вăрлăхсемпе улăштарма ирĕк панă. Улăштарас шутпа паракан мĕнпур вăрлăхсене колхозсен çулсем пăсăличчен турттарса каймалла. Тĕштырăсен вăрлăхĕсемсĕр пуçне, колхозсен тата техникăллă культурăсен, çĕрулмин, тымар-çимĕçсен тата пахча-çимĕçсен вăрлăхĕсене çителĕклĕ таран тупса хумалла.

Вăрлăхсене тасатасси тата сортлассси, вĕсене акмалли кондицие çитересси—вăрлăхсене акма хатĕрленĕ çĕрте питĕ кирлĕ ĕç пулса тăрать. Наркомзем каланă тăрăх, çак ĕçе пур районсем те пурнăçланă. Анчах та вăрлăхсен пахалăхĕ пире кирлинчен нумай начартарах-ха. Вăрлăхсене лабораторисенче тĕрĕслеттерсен вăрлăхсенчен 33 проценчĕ кондициллĕ мар пулни палăрнă, вĕсенчен 32 процентĕ тасалăх енчен кондициллĕ мар, пĕр процентĕ—шăтаслăх енчен кондициллĕ мар. Çак тĕлĕшпе Элĕк, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче тата хăшпĕр ытти районсенче те ĕç уйрăмах начар тăрать.

Вăрлăх хатĕрлес ĕç çине çиелтен пăхнине пĕтерсе лартмалла.

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсасси

Ялхуçалăх ĕçĕсене туса ирттернĕ çĕрте машинно-тракторнăй станцисем мирлĕ строительство вăхăтĕнче те пысăк вырăн йышăнса тăнă. Вăрçă вăхăтĕнче колхозсенче ĕç вăйĕ тата ĕç выльăхĕн хисепĕ чакнă пирки, машинно-тракторнăй станцисен вырăнĕ татах та пысăкланчĕ. Колхозсенче мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене тата государство заданийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе МТС-сенчи работниксен ответлăхĕ ÿсрĕ.

МТС начар ĕçлени колхозсене пысăк йывăрлăха кĕртсе ÿкерет, ялхуçалăхне пысăк сиен кÿрет. Пăрачкав, Кувакино, Кожевенски, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле МТС-ĕсем пĕлтĕр тракторпа тумалли ĕçсен планне пурнăçлайман. Шăп çав районсем вара пĕлтĕрхи ялхуçалăх çулне питĕ начар вĕçленĕ, çакă вăл ăнсăртран пулнă япала мар.

Машинăсемпе тракторсене çураки валли вăхăтра хатĕрлесе хурасси питĕ кирлĕ ĕç пулса тăрать. Анчах та тракторсене тата вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли инвентаре юсас ĕç начар пулса пырать. Мартăн 10-мĕшĕ тĕлне тракторсенчен 75,9 процентне, трактор плугĕсенчен 60,5 процентне, сеялкăсенчен 68,6 процент, культиваторсенчен 68,8 процентне çеç юсанă. Октябрьски МТС-ра 27 трактор вырăнне 10 трактор кăна юсанă. Тракторсем юсамалли плана Пăрачкав МТС-ĕ 37 процент, Сиява МТС-ĕ—46 процент. Етĕрне МТС-ĕ — 48 процент çеç пурнăçланă. Тракторсене юсас ĕçре Тăвай, Çĕмĕрле, Сурмайдан, Шăмăршă, Первомайски, Кувакино МТС-ĕсем те нумай кая юлса пыраççĕ.

Çак МТС-сен директорĕсем хăйсем юлса пынине запаслă пайсем çуккипе тÿрре кăларма пăхаççĕ. Анчах ĕç çакăнта кăна мар. Ĕçпе производствăна начар организацилени, ĕç дисциплини тивĕçлĕ вырăнта пулманни, машинăсене юсанă çĕрте ĕçлекен рабочисем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе кирлĕ пек туса пыманни—акă мĕн чăрмантарать çак МТС-сене тракторсемпе вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсас ĕçре.

МТС директорĕсен юсав ĕçне хăвăрт вĕçлес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнас пулать. Анчах тракторсемпе вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсаса çитернипе МТС-сене çуракине хатĕрлес ĕç вĕçленмест-ха. Кирлĕ чухлĕ тĕрлĕ инвентарьсем, урапасем, хирти вагонсем, горючие усрамалли лупасайсем халех хатĕрлемелле, кашни трактор бригадине çулталăкри производство заданийĕсене çитерсе памалла, тракторсемпе ялхуçалăх машинисене техника енчен пăхса усрамалли графиксем туса памалла. Трактор бригадисене колхозсем çумне, пысăк колхозсенче вара уйхир бригадисем çумне çирĕплетмелле, кирлĕ чухлĕ горючи тата сĕрмелли материалсем турттарса тухмалла, газогенераторлă тракторсем пур пулсан, типĕ чуркисем халех хатĕрлесе хумалла.

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра).

Республикăри ялхуçалăх работникĕсен канашлăвĕ

Енер Шупашкарта республикăри ялхуçалăх работникĕсен канашлăвĕ уçăлчĕ.

Канашлу президиумĕнче—ВКП(б) Обкомĕн секретарĕсем Чарыков, Ахазов, Андреев юлташсем, Чăваш АССР Совнарком председателĕ Матвеев юлташ, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Андреева юлташ, ВКП(б) Центральный Комитечĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиссийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ Логвин юлташ, ВКП(б) Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Бобров юлташ, ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ Вишняков юлташ, Шалти ĕçсен халăх комиссарĕ Белолипецкий юлташ, Çĕрĕç халăх комиссарĕ Широв юлташ, Мари АССР-ĕн Дыганов юлташ пуç пулса ертсе пыракан делегацийĕ, малта пыракан районсен, МТС-сен тата колхозсен руководителĕсем, ялхуçалăхĕнче малта пыракан стахановецсемпе специалистсем т. ыт. те.

Канашлу тăвăллăн алă çупса Хисеплĕ президиума ВКП(б) Центральный Комитечĕн Аслă Сталин пуç пулса ертсе пыракан Политбюро членĕсене суйларĕ.

ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ çуракине хатĕрленсе ирттерессси çинчен доклад турĕ.

Чарыков юлташăн доклачĕ тăрăх пренисем пуçланчĕç. Çак юлташсем тухса каларĕç: Лаврентьев (Куславкка МТС директорĕ), Тямин (Сĕнтĕр районĕнчи «Колос» колхоз председателĕ), Яковлева (Вăрмар районĕнчи «Новая жизнь» колхоз председателĕ), Никонов (Вăрнар МТС директорĕ). Ефремов (Куславкка районĕнчи «Динамо» колхоз председателĕ), Осанов (Чăваш АССР Наркомземĕн Пахча-çимĕç управленийĕн начальникĕ). Попов (Етĕрне районĕнчи Никольски колхоз председателĕ), Петрова (Шупашкар районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ) тата Беляев (Чăваш АССР Наркомземĕн главнăй агрономĕ).

Ирхи лару çакăнпа хупăнчĕ.

ВЦСПС-па СССР Çăмăл промышленность Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па СССР Çăмăл промышленность Халăх Комиссарначĕ, предприятисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1945 çулхи февраль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Çĕмĕрлери экстракт заводне икĕмĕш премии пама йышăннă.

И. М. ЧАРЫКОВ юлташ доклачĕн вĕçĕ

Пур МТС-сенче те механизаторла кадрсене çуракине тухиччен хатĕрлесе çитересси—паян тумалли пысăк ĕç пулса тăрать.

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ ялхуçалăхне аталантармалли план çинчен йышăннă постановлени тăрăх, çуракине тухиччен кашни МТС уйхир ĕçĕсене тума мĕнле хатĕрленнине государство енчен тĕрĕслесе тухмалла. Çакăн чухне трактор бригадисенче кадрсене тĕрĕс вырнаçтарса тухасси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла, кăкарса ĕçлемелли машинăсемпе тĕрлĕ инвентарьсем, инструментсем, катка-пичкесем, запаслă пайсем бригадăсене çителĕклĕ панипе паманнине тĕрĕслемелле. МТС тракторсене хирте юсама хатĕррипе хатĕр маррине тимлĕн тĕрĕслемелле.

Лашапа ĕçлемелли машинăсемпе инвентарьсем те çуракинче пĕчĕк мар вырăн йышăнса тăраççĕ. Апла пулин те, уйрăм районсемпе колхозсенче вĕсене юсаса хатĕрлес ĕç çине сӳрĕккĕн пăхаççĕ. Колхозсенче час-часах çакăн пек пулнине курма пулать: плугсем, сӳресем тата урапасем пĕтĕм ялĕпех сапаланса выртаççĕ, сеялкăсен сошникĕсем хуçăлса пĕтнĕ, вĕсен тимĕр пайĕсем тутăхса кайнă, ещĕкĕсене пĕлтĕрхи вăрлăхсенчен тасатман е унта юр тулса ларнă.

Мартăн 10-мĕшĕ тĕлне илсен, республикăри колхозсенче плугсене 72 процент, сеялкăсене 79 процент кăна юсаса хунă. Ялхуçалăх машинисене юсас ĕç Советски районри колхозсенче питĕ начар пулса пырать, унта 2.200 плугран 1.125 плугне кăна, 190 сеялкăран 99 сеялкине кăна юсаса хатĕрленĕ. Канаш, Куславкка тата ытти чылай районсенчи колхозсенче те ĕç унтан лайăхах мар. Хăшпĕр районсенче ялхуçалăх машинисене юсама халиччен тытăнман колхозсем те пур.

Лашапа ĕçлемелли ялхуçалăх инвентарĕсене юсас тĕлĕшпе чăнласах ĕçлеме тытăнас пулать, вĕсене вăхăтра юсаса хуни кирлĕ.

Туртăм вăйне çуракине хатĕрлесси

Республикăри малта пыракан колхозсем çураки тума лашасене тăрăшса хатĕрлеççĕ. Сăмахран, Калинино районĕнчи «Броневик» колхоза илме пулать. Кунта пур лашасем те мăнтăр тата вăтам ӳт-пӳллĕ. Ĕçлеме юрăхлă кашни лаша валлиех лайăх хăмăтпăявсем хатĕрленĕ. Лашасем валли колхоз лайăх утă тата тĕштырăсем çителĕклех уйăрса хунă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Новая деревня», 17-мĕш Партсъезд ячĕпе тăракан колхозсенче, Советски районри «Сеятель» колхозра та лашасене юратса пăхса усраççĕ. Лашасене кунта ăшă та çутă витесенче тытаççĕ, вĕсем валли кирлĕ чухлех апат хатĕрлесе хунă, ут таврашĕсем те çителĕклĕ пур.

Анчах лашасемшĕн пур колхозсенче те çакăн пек тăрăшни çук-ха. Февраль уйăхĕнче лашасене тĕрĕслесе тухнă чухне начар ӳт-пӳллисем республикăра 30 процента яхăн пулни паларчĕ.

Ырхан лашасем уйрăмăнах Хĕрлĕ Чутай, Тăвай, Шăмăршă, Йĕпреç, Первомайски, Пăрачкав тата Ишлей районĕсенчи колхозсенче нумай. Республикăра кăрчанкă чирне халĕ те пĕтермен-ха.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Прогресс» колхозра иртнĕ çулта лашасем нумай вилнĕ, халĕ вĕсен лашасем питĕ сахал. Çак артелĕн председателĕ Чумейкин юлташ лашасемшĕн тăрăшмасть, вĕсемпе ялан ĕçлеме колхозниксене çирĕплетсе паман. Кунта лашасене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕçре обезличка пуç пулса тăрать, ут таврашĕсене колхозниксен килĕсене парса пĕтернĕ, вĕсене юсамаççĕ.

Лашасене пăхса усрас тата вĕсемпе усă курас ĕçри обезличкăна татăклăнах пĕтерме тахçанах вăхăт ĕнтĕ.

1944 çулта пирĕн республикăра 74 процент кăна кĕрхи çĕртме тунă. Çавăнпа та кăçал çуркунне нумай çĕр сухаламалла пулать. Çакă та ĕнтĕ лашасене çуракинче ĕçлеме лайăхрах хатĕрлеме хушать. Лашасене тăрăшса пăхса усрас пулать, вĕсемпе ялан ĕçлеме колхозниксене çирĕплетес пулать, вĕсене пăхма ача-пăчасене мар, опытлă та вăл ĕçе юрататакан çынсене хушас пулать. Пĕр кун та вăраха ямасăр, лашасене тĕрĕслесе тухас пулать, чирлисене тата начарланса кайнисене халех уйрăм ушкăна уйăрмалла та вăйлă апат çине тăратмалла тата сиплемелле.

Лашасене çураки вăхăтĕнче çитерме пур колхозсенче те çителĕклĕ чухлĕ утă тата сĕлĕ уйăрса хумалла. Ут таврашĕсемпе урапасене йĕркене кĕртмелле, кашни ĕçлекен лашапа вăкăрăн хăйĕн хăмăчĕ-ĕнерчĕкĕ пултăр, колхозсене лашасем мĕнлине шута илсе тӳлемелле йĕрке тăвас пулать.

Ялхуçалăх ĕçĕсенче колхозсемпе колхозниксен ĕнисемпе тата вăкăрĕсемпе усă курасси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Колхоз председателĕсен, бригадирсен, комсомолецсен, коммунистсен тата ялти пĕтĕм активăн çураки вăхăтĕнче колхоз уйхирĕсенче харпăрхăй ĕнисемпе ĕçлес тĕлĕшпе чи малтан хăйсен пример кăтартмалла.

Çуракинчи паха агротехникăшăн

Уйхир ĕçĕсен пахалăхне çĕклес ыйту мирлĕ вăхăтра колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетмелли, колхозниксен материальнăй пурнăçне лайăхлатмалли тĕп ыйтусенчен пĕри пулнă. Çак ыйту вăрçă условийĕсенче титах та пысăкрах вырăн йышăнса тăрать. Ялхуçалăх ĕçĕсен пахалăхне татăклăнах лайăхлатмасăр, агротехника хушнисене тĕрĕс пурнăçа кĕртмесĕр, колхозсен экономикине çĕклеме çук.

Çак задачăна Вăрнар, Çĕрпӳ, Калинино, Сĕнтĕр, Елчĕк тата ытти чылай районсенчи çĕрĕç органĕсемпе колхозсен руководителĕсем лайăх ăнланса илчĕç, вĕсем агротехникăна тырпулшăн кĕрешмелли хăватлă хĕçпăшал туса хучĕç. Анчах хăшпĕр районсемпе колхозсен руководителĕсем юлашки çулсенче агротехника çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхмарĕç.

1944 çулта республикăри кая юлакан районсенче агротехникăна уйрăмах пăсса ĕçлерĕç. Çак районсенчи нумай колхозсенче çуракине тӳсме çук вăраха ячĕç, çĕре ĕçлемелли чи çăмăл правилăсене те пурнăçа кĕртмерĕç, ăшăх сухаланисем пулчĕç, сумкурăкĕсемпе кĕрешмерĕç тата тăпрара нӳрлĕх тытса хăварма, сеялкăсемпе усă курма, вăрлăхсене яровизацилеме тата чухесе тасатма тăрăшмарĕç. Агротехникăна пĕрмаях пăсса ĕçленĕ пирки çав колхозсен уйхирĕсенче арăмути, шурут тата ытти сумкурăкĕсем нумай, хурт-кăпшанкăсем тырпулсемпе пахча-çимĕçсене пысăк сиен кӳреççĕ.

Кашни колхозăн агротехника планĕ пулмалла, çав планра тырпулсене кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа акса хăварасси уйрăмах уççăн палăрса тăмалла. Пирĕн çĕртен вăл мĕн пама пултарнине йăлтах илессишĕн кĕрешмелле.

Çав планра сумкурăксемпе кĕрешес, тăпрара нӳрлĕх пухса упраса хăварас ĕçсем пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Колхозсен хирĕсенче çурхи шывсене тытса хăварас ĕçсене анлăн организацилемелле.

Сеялкăсемпе акас ĕçе хакламасăр, алăпа акма тăрăшакан çынсене хирĕç кĕрешӳ пуçарса ямалла. Колхозсен сеялкисемпе, май пур таран туллин усă курмалла, вĕсемпе ĕçлеме опытлă колхозниксене уйăрмалла, вĕсене лайăх лашасем çирĕплетсе памалла. Çĕрĕç органĕсемпе агрономсен кашни колхозра кашни тырпула мĕнле нормăпа акмаллине вăхăтра палăртса памалла, çакна тунă чухне вăрлăхпа тăпра пахалăхне шута илмелле. Çĕрĕç органĕсемпе агрономсен кăтартăвĕсене колхоз руководителĕсен тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пымалла.

Çураки вăхăтĕнче ĕçсен пахалăхне тĕрĕслесе тăни питех те кирлĕ. Колхоз председателĕсем, бригадирсем, пахалăх инспекторĕсем ака вăхăтĕнче уйра пулмалла тата агротехника правилисене кăшт та пулин пăснине те вĕсем вăхăтра палăртса пĕтерсе пыма тивĕçлĕ.

Партипе правительство агрономăн авторитетне çӳле çĕклерĕç. Колхоз правленийĕсемпе пĕрле агроном туса палăртнă агротехника мероприятийĕсене никам та пăрахăçа кăларма е улăштарма пултараймасть. Вăл мероприятисене туса палăртнă агроном хăй кăна е çĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ кăна çав мероприятисене улăштарма пултараççĕ. Агрономăн социализмлă çĕрĕçĕнчи культурăшăн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешмелле. Анчах та чылай районсенче агроном кăтартса панисемпе унăн сĕнĕвĕсене хакламасăр тăрассине халиччен те пĕтермен-ха. Агрономсемпе тĕрĕс усă курас пулать. Колхозсене агротехника планĕсем тума пулăшас вырăнне, канцелярисенче ларса сводкăсем тăвасси—агроном ĕçĕ мар. Агрономăн вырăнĕ—колхозра, хирте, тырпул тухăçлăхĕшĕн кĕрешӳ пынă çĕрте.

Кăçал пирĕн çураки вĕçленнĕ хыççăн уйхир ĕçĕсене государство енчен тĕрĕслесе йышăнассине пурнăçа кĕртмелле. Çакăн чухне эпир районсен, колхозсен тата агрономсен ĕçне ака планне хисеп енĕпе тултарни тăрăх кăна мар, тата ĕçсен пахалăхĕ тăрăх та, агротехника мероприятийĕсене пурнăçа кĕртни тăрăх та хаклăпăр, мĕншĕн тесен çакă вăл пысăк тухăçлă тырпул туса илмелли татăклă услови пулса тăрать.

Тĕштырă культурисен вăрлăхĕсене туса илес ĕçе лайăхлатасси

ССР Союзĕн Совнаркомĕ çĕрĕç органĕсем умне 1945 тата 1946 çулсенче сортлă тĕштырăсем акассине вăрçăччен хисепе çитерес задача лартрĕ.

Кăçал пирĕн республикăри 10 районра вăрлăх хуçалăхĕсем çĕнĕрен организацилемелле. Çĕнĕрен организациленекен вăрлăх хуçалăхĕсенче çĕр касса парас тата тĕрĕс пусуçаврăнăшсем тăвас ĕçе пурнăçа кĕртмелле. Ытти вăрлăх хуçалăхĕсенче те, унта пусуçаврăнăшĕсене пăснă пулсан, вĕсене йĕркене кĕртмелле.

Çĕрĕç органĕсемпе колхоз руководителĕсен çураки ĕçĕсем пуçланиччен колхозсенче кăтартса панă чухлĕ вăрлăх участокĕсем уйăрса хумалла тата вĕсене уйрăм звеносене çирĕплетсе памалла. Вăрлăх участокĕсенче агротехникăна çирĕппĕн пăхăнса пымалла: лайăх ĕçлесе хатĕрленĕ, кĕрхи çĕртме тунă çĕр çине суйласа илнĕ сортлă вăрлăх тата агротехникăллă лайăх срокра акмалла, тырпул калчисене тимлĕн пăхса ӳстермелле. Вăрлăх участокĕсене обязательнăй йĕркепе актсем çырса уйăрса илмелле. Вăрлăх участокĕсене тĕрĕс уйăрса илессишĕн тата вĕсенче агротехникăна çирĕппĕн пăхăнса пырассишĕн райçĕрĕç пайĕн вăрлăх енĕпе ĕçлекен агрономĕ тата колхоз председателĕ ответлă пулса тăраççĕ.

Кĕрхи тырăсен калчисене пăхасси

Çуркунне туса ирттермелли хирти ĕçсен планĕнче кĕрхи тырăсен калчисене çуркунне пăхмалли ĕçсене уйрăм палăртса хумалла. Кăçал хирсенче юр тикĕс выртман, вырăнĕ-вырăнĕпе вăл ытла та хулăм. Калчасем çĕрме пултараççĕ. Вĕсем ан çĕрччĕр тесен, хирсенче юр мĕнле ирĕлнине сăнаса тăмалла; нумайччен ирĕлмесĕр выртакан юр çине кĕл, çĕрĕк тăпри тата торф сапмалла, вара юр хăвăрт ирĕлет.

Калчасене çуркунне иртерех апатлантармалла. Вĕсене апатлантарма пуриччен ытла кайăк-кĕшĕкĕн вĕтетнĕ тислĕкĕпе, лайăх çĕрнĕ тислĕкпе, çĕрĕк тăприпе тата кĕлпе усă курмалла. Çакăнпа пĕр вăхăтрах кĕрхи тырăсен калчисене çуркунне сӳрелесе тухмалла.

Вырăнти удобренисем хатĕрлесе хире кăларасси

Мартăн 10-мĕшĕ тĕлне пĕтĕм республикипе 3.039 пин лав тислĕк кăларнă, çакă вăл планăн 77,7 проценчĕ пулать. Хĕлле тислĕк кăлармалли плана Вăрнар районĕ 117 процент, Ишлей районĕ—109 процент, Октябрьски район—102 процент тултарнă. Чкаловски, Чурачăк, Сĕнтĕр тата Вăрмар районĕсен те плана тултарасси нумай юлман.

Анчах чылай колхозсем пухăннă темĕн чухлĕ тислĕке, кĕле тата вырăнти ытти удобренисене хире кăлармаççĕ, ахалех сая яраççĕ. Вырăнти удобренисене çавăн пек сая янине тата вĕсемпе çителĕклĕ усă курманнине пула, колхозсемпе совхозсем тата подсобнăй хуçалăхсем çулленех, тырпул, çĕрулми, пахча-çимĕç тата техникăллă культурăсем нумай сахалтарах туса илеççĕ.

Хальхи вăхăтра, минераллă удобренисем çитмен вăхăтра, вырăнти удобренисене çителĕклĕ хак паманнине пушшех те тӳсме çук. Тислĕке тата вырăнти ытти удобренисене пухас, усрас тата вĕсемпе тĕрĕс усă курас ыйтусем çине питĕ тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

Пусуçаврăнăшĕсем тата вĕсене çĕнĕрен йĕркене кĕртсе çитересси

Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстермелли чи лайăх май вăл—пусуçаврăнăшĕ пулса тăрать. Пăсăлнă пусуçаврăнăшĕсене çĕнĕрен йĕркене кĕртес тата çĕнĕ пусуçаврăнăшĕсем тăвас ĕç çине район руководителĕсемпе çĕрĕç органĕсен уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

1945 çулхи план пур тырăсене те пусуçаврăнăшĕн пуссисене акма май парать. Кăçал эпир нумай çул хушши ӳсекен курăксен чылай пысăк лаптăкне пĕрремĕш хут вăрлăхлăх хăварма пултарăпăр. Ăна эпир кĕрхи тырăсем акмалли государство планне чакармасăрах тума пултарăпăр. Нумай çул хушши ӳсекен курăксем акмалли плана пурнăçа кĕртме пĕтĕм вăйпа тăрăшмалла, вĕсене акма вăрлăхсен мĕнпур запасĕсемпе усă курмалла. Çапла тумасăр пусуçаврăнăшĕсене тепĕр хут пурнăçа кĕртме тата культурăсене тĕрĕс ылмаштарса акса пыма май çук. Курăксен вăррисене çитес кунсенчех шĕкĕлчесе пĕтермелле, вĕсене акмалли кондицие çитермелле, клеверăн шĕкĕлчемен вăрлăхне акма чармалла.

Елĕкрех тунă пусуçаврăнăшĕсене пурнăçа кĕртнипе пĕрлех пирĕн çĕр йĕркелемен колхозсенче пусуçаврăнăшĕсене йĕркене кĕртес тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле пулать. Çак ĕçе кăçалах туса иртермелле. Колхозсенче çĕре шута илес ĕçе татăклăнах лайăхлатмалла, çĕрпе тĕрĕс усă курнине çирĕп тĕрĕслесе тăмалла.

Çĕрулмипе пахча-çимĕçсем çинчен

1944 çулта пирĕн республикăри колхозсем çĕрулмипе пахча-çимĕçсен тухăçлăхне чылай ӳстерчĕç. Республикăра кашни гектартан 200 центнер çĕрулми тата ытларах та пухса илнĕ колхозсем вуншар шутланаççĕ. Çĕрпӳ районĕнчи «Ĕмĕт» колхозра, акă, кашни гектартан вăтамран 262 центнер çĕрулми кăларнă. Красноармейски районри «Унгастрой» колхозра пахча-çимĕç бригадирĕ Иванова юлташ 4 гектар çĕр çинче кашни гектартан 380-шар центнер купăста пухса илнĕ, выльăх кăшманне вара 580-шар центнер пухса илнĕ. Сĕнтĕр районĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхозри пахча-çимĕç бригадирĕ Образцов юлташ кашни гектартан 150-шар центнер помидор пухса илнĕ.

Пирĕн умра çакăн пек задача тăрать: кăçал пур колхозсенче те çĕрулмипе пахча-çимĕçсем нумайрах туса илмелле. Çĕрулмипе пахча-çимĕçсен вăрлăхĕсем çитмесçĕ пулсан, вĕсене çуракине тухиччен пĕтĕмпех пухса çитермелле. Апата каякан çĕрулмин тăррине касас ĕçе организацилемелле, ăна çĕре лартиччен тĕрĕс сыхласа усрамалла. Çĕрулми вăрлăхĕ çитмен колхозсенче çĕрулми куçĕсене Якушкин академик кăтартнă майпа касса лартмалла тата çĕрулми калчисене Дунин профессор кăтартнă майпа лартса ӳстермелле. Сортлă мар вăрлăхсене вăхăтра сортлисемпе улăштармалла. Чи лайăх вăрлăхсене вăрлăх участокĕсем валли уйăрса хумалла. Çĕрулмипе пахча-çимĕçсен вăрлăхĕсене яровизацилеме халех хатĕрленмелле.

Юлашки çулсенче нумай районсенче пахча-çимĕçсен калчисене панчасенче тата теплицăсенче хатĕрлес ĕçе вăйсăрлатрĕç. Çавна пула колхозсенче панчасемпе теплицăсен хисепĕ нумай чакрĕ, пуррисем те юсавлă мар. Çакна чăтса тăма çук. Колхозсене пахча-çимĕç калчисем пахчасенче лартма çителĕклĕ таран хатĕрлеме задани парас пулать. Çакăнпа пĕрлех колхозсенче уйрăмах хуласемпе рабочи поселоксен çывăхĕнчисенче, ир ĕлкĕрекен пахча-çимĕçсем лартса ӳстерес пулать.

Техникăллă культурăсем çинчен

Юлашки çулсенче нумай колхозсем кок-сагыз акса тăвас ĕçĕн агротехникине вĕренсе çитрĕç, кок-сагыза нумай ытларах акса тума пуçларĕç. Уйрăм бригадăсемпе звеносем кок-сагыз тухăçлăхне рекордлă хисепе çитерчĕç. Елчĕк районĕнчи «Автогигант» колхозра 5 гектар çĕр çинче кашни гектартан 18,3-шер центнер кок-сагыз тымарĕ пухса илнĕ. Красноармейски районри «Красный Борденер» колхозра 5 гектар çĕр çинче пĕр çул ӳсекен кок-сагыз тымарне кашни гектартан 20—22-шер центнер пухса илнĕ.

Анчах чылай колхозсенче кок-сагыз тухăçлăхĕ питĕ çителĕксĕр-ха. Çĕрĕç работникĕсемпе колхоз руководителĕсенчен хăшпĕрисем кок-сагыз акса тăвас ĕç çине сиелтен çеç пăхаççĕ. Агротехника правилисене пăснă пирки тата акнă кок-сагыза пăхман пирки 1944 çулта Тăвай районĕнче пĕр çул ӳсекен кок-сагызăн 53 проценчĕ пĕтнĕ, Çĕрпӳ районĕнче 67 проценчĕ пĕтнĕ, пĕтĕм республикипе илсен—пĕр çул ӳсекен кок-сагызăн 45 процентне яхăн пĕтнĕ.

Пирĕн махорка тухăçлăхĕ халĕ те питĕ пĕчĕккĕ-ха. Çавăнпа махорка хатĕрлемелли плана районсем çулсеренех тултараймаççĕ. Республикăра йĕтĕн тата кăнтăр акса ӳстерес ĕç те питĕ япăх пырать.

Кăçал çав культурăсен тухăçлăхне нумай ӳстермелле.

Садсемпе çырла пахчисем çинчен

Пĕтнĕ садсене çĕнĕрен чĕртсе ярас тĕлĕшпе кăçал питĕ тăрăшса ĕçлемелле, çĕнĕ садсем, уйрăмах та çырла пахчисем тăвас ĕçе сарса ямалла. Кашни колхоз садсемпе çырла пахчисем 3—5 гектартан кая ан лартчăр. Колхозниксен тата рабочисемпе служащисен çурт çуменчи участокĕсенче çырла йывăççисем лартас ĕçе нихçанхинчен те вăйлăрах сарса ямалла пуринчен ытла чие, слива, хурлăхан, крыжовник, хăмла çырли йывăççисем лартмалла.

Колхозсенче производство планĕсемпе рабочи плансем вăхăтра туса хатĕрлесси

Колхозсен производство планĕсемпе рабочи планĕсене хатĕрлес ĕçе пĕтĕм колхоз активне хутшăнтармалла, вĕсене сӳтсе явас ĕçе мĕнпур колхозниксене явăçтармалла.

Çав плансенче культурăсене мĕнле йĕркепе акмаллине тата кашни культурăн бригада, звено тăрăх агротехникăллă мĕнпур ĕçсене пурнăçа кĕртмеллине палăртса хумалла. Ĕç вăйĕпе туртăм вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухмаллине тата ĕçсен срокĕсене палăртса хумалла. Сухаçăсем, акансем, лавçăсем пулса ĕçлеме чи лайăх колхозниксене уйăрса хумалла, вĕсене ĕç выльăхĕпе инвентарь уйăрса памалла, çуракинчи нормăсемпе ĕç хакĕсем çинче тата ĕçсене мĕнле йĕркепе, мĕнле сроксенче тумаллине ăнлантарса памалла.

Çуракине ăнăçлăн иртересси уйхир бригадисене малалла çирĕплетнинчен нумай килет. Уйрăм колхозсенчи уйхир бригадисенче çынсем тата туртăм вăйĕ чакнă, çавăнпа çав бригадăсенчи çынсен йышне тепĕр хут пăхса тухмалла, вăйсене урăхла валеçсе тухмалла. Лашасемпе вăкăрсене бригадăсене, бригадăсенче—уйрăм колхозниксене вăхăтра çирĕплетсе памалла. Çапла туни лашасемпе вăкăрсене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕçре обезличкăна пĕтерме пулăшать. Бригадăсене ертсе пыма чи лайăх, опытлă колхозниксене уйăрса хурас пулать. Уйхир бригадисене çĕр участокĕсем уйăрса панине тĕрĕслесе тухмалла. Çакăнпа пĕрлех бригадăсенче яланхи звеносем тумалла, çураки пуçланиччен вĕсене хăйсем акмалли культурăсене акмашкăн участоксем уйăрса памалла. Çавăн пек звеносене пур колхозсенче те тумалла, çав звеносем çулталăкĕпех хăйсен участокĕ çинче ĕçлеччĕр. Звеньевойсене уйăрса лартас ĕç çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла, мĕншĕн тесен звено тухăçлăн ĕçлесси çав звеньевойсенчен нумай килет. Звеносене чи лайăх та хастарлă çынсем, колхозниксене организацилеме пултараканнисем ертсе пыччăр.

Звеносенче колхозниксен ĕçне уйрăм сдельщина йĕркипе организацилесен, звеносем тухăçлăрах ĕçлеççĕ. Çав йĕрке вăл дисциплинăна тата ĕç тухăçлăхне хăпартма пулăшать. Анчах ĕçе вара кулленех шута илсе пырас пулать. Кашни колхозник каçхине е тепĕр кунне ирхине—хăй мĕн тунине çеç мар, унăн ăна мĕн чухлĕ ĕçкунĕ çырса хунине те пĕлме пултартăр.

Пĕрле апатланас ĕçе организацилеме, ача яслисемпе площадкăсем уçма вăхăтра хатĕрленмелле.

* * *

Пирĕн умра тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçласси—ялта политикăллă-массăллă ĕçе мĕнле туса пынинчен килет. Кăçал вăйлă тырпул туса илес ĕçе хальхи, çак кунсенче, çуракине ăнăçлăн иртерме хатĕрленнĕ вăхăтра татса пани çинчен пур колхозниксене те ăнлантарса памалла. Колхозниксен патриотла çĕкленĕвне ертсе пымалла, кăçал çĕнтерӳ ячĕпе вăйлă тырпул туса илмешкĕн кĕрешме пĕтĕм халăха организацилемелле. Ялти массăллă-политикăллă пĕтĕм ĕçе, парти, совет тата комсомол организацийĕсен, клубсен, вулав çурчĕсен, библиотекăсен, хаçат-журналсен, киносен, радион пĕтĕм ĕçне çав чыслă та ответлă задачăна пурнăçлас тесе, тăрăшса туса пымалла.

Кăçал çуракине иртерес ĕçре йывăрлăхсем сахал мар пулĕç. Эпир çав йывăрлăхсене пытармастпăр, вĕсем çинчен уççăнах калатпăр. Пирĕн нумай колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисенче лашасемпе вăрлăхсем тĕлĕшпе, машинăсемпе инвентаре юсас тĕлĕшпе ĕç япăх пырать.

Анчах пирĕн çав йывăрлăхсене çĕнтерме, çуракине вăхăтра хатĕрленсе ăнăçлăн иртерме кирлĕ условисем пур те пур. Малта пыракан районсен, колхозсен тата МТС-сен опычĕ çакна лайăх кăтартса парать. Вăрнар районĕ вăйлă тырпул туса илессишĕн районсем хушшинче пынă Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухрĕ, вăл пысăк награда илме тивĕçлĕ пулчĕ, ăна Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пачĕç. Вăрнар МТС-не СССР Наркомземĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пачĕç.

Вăйлă тырпул туса илессишĕн мĕнле кĕрешмеллине колхозниксен, трактористсен, специалистсен тата ялхуçалăхĕнчи мĕнпур работниксен Вăрнар районĕнчен вĕренмелле. Вăрнарсен ĕç опычĕпе пирĕн республикăри мĕнпур колхозсене паллаштармалла.

Çуракине ăнăçлăн хатĕрленессишĕн пыракан социализмлă ăмăрту чăннипех пĕтĕм халăх ăмăртăвĕ пулса тăтăр тесе тăрăшмалла. Вăйлă тырпул туса илессишĕн пыракан ăмăртăва хутшăнмасăр пĕр колхоз та, пĕр МТС та, пĕр район та ан юлтăр! Колхозсемпе МТС-сен хисеплĕ çыннисем, ялхуçалăхĕнчи специалистсем, парти, совет тата колхоз активĕ—ялти социализмлă ăмăртăва пуçарса яракансем пулмалла, Сталинла вăйлă тырпул туса илессишĕн пыракан пĕтĕм халăх походĕнче чи малти ретре пымалла.

Çитес çураки кăçалхи социализмлă ăмăртăвăн чи паха тапхăрĕ пулса тăрать. Уйхирсен тухăçлăхне малалла ӳстерес тата колхозсенчи выльăх-чĕрлĕхсен хисепне ӳстерес ĕçре колхозсенчи мĕнпур майсемпе усă курмалла.

Кăçалхи июнь уйăхĕнче эпир Чăваш республики 25 çул тултарнине уявласа иртеретпĕр. Чăваш республики 25 çул тултарни вăл пирĕн орденлă республикăри рабочисен, колхозниксен тата совет интеллигенцийĕн пурнăçĕнчи питĕ пысăк та чаплă событи пулса тăрать.

Çав чаплă куна тивĕçлипе кĕтсе илмешкĕн тăрăшса ĕçлер! Çуракине вăхăтра хатĕрленсе кăтартулăн иртерер, кăçалхи вăйлă тырпулăн—çĕнтерӳ тырпулĕн никĕсĕ хывса хăварар! (Алă çупаççĕ).

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре каланă тăрăх, союзниксем Мозель шывĕнчен кăнтăртарахра тата Рейн шывĕнчен хĕвеланăçнерехре нимĕçсем тытса тăракан района хĕссе пырса, пысăк мар укреплени пысăкĕш кăна хăварнă. Çав плацдармри Германи чаçĕсене, пĕтĕмĕшпе илсен, йĕркерен кăларнă. Çав участокра союзниксем халăх пурăнакан 9 пункта тытса илнĕ. Тăшман çарĕсен юлашкийĕсене тата темиçе тĕлте пĕтерсе пыраççĕ.

Пирмазенспа Рейн хушшинче нимĕçсем, каялла чакма çул уçă хăварас тесе, вăйлă хирĕç тăраççĕ.

Ремаген патĕнчи укреплени районĕнче союзниксем темиçе ял тытса илнĕ те 11 километр тăршшĕ участокра Зиг шывĕ хĕррине тухнă.

Мартăн 20-мĕшĕнче союзниксем хĕвеланăç фронтĕнче 8.683 çынна тыткăна илнĕ.

Мартăн 21-мĕшĕнче истребительсем хӳтĕлесе пыракан 1.400 йывăр бомбардировщик Хĕвеланăç Германири 10 аэродрома тапăннă, çĕр çинче нимĕçсен 43 самолетне пĕтерсе тăкнă тата 19 самолетне пĕрсе ӳкернĕ. Союзниксен 35 самолет пĕтнĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 3-мĕш армийĕн чаçĕсем ĕнер Людвигсхафен хулине кĕрсе кайнă, хула витĕр туха, Рейн патнелле куçаççĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 22-мĕшĕнче ирхине акăлчансен «Ланкастер» йышши бомбардировщикĕсем Германие тапăннă. Иртнĕ çĕрле «Москито» йышши бомбардировщиксем икĕ хутчен Берлина тапăннă. Ку ĕнтĕ Берлина çĕрле 30-мĕш хут тапăнни пулнă.

ГЕРМАНИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Англири радиопередатчикĕ хăйĕн Стокгольмри корреспонденчĕн пĕлтерĕвне парать. Стокгольмра паллă пулнă тăрăх, «нацистсен вĕт-шакăр членĕсем, союзниксен çарĕсем килессинчен хăраса, тем тĕрлĕ те хăтланаççĕ. Германирен нумай пулмасть килнĕ çынсем каласа панă тăрăх, Берлинри çӳп-çап ещĕкĕсенче нацистсен партийĕн член билечĕсем нумай выртаççĕ. Гестаповецсем «мирлĕ граждансем» пулса тăраççĕ. Вĕсене çĕнĕ документсем параççĕ. Сăмахран, Париж хулинче Шульц хуçаматлă пĕчĕк гестаповец Берлинра конторăри пĕчĕк служащи Шмидт пулса тăнă. Нимĕç халăхĕн пур сийĕсем те пĕтсе ларас кунсем çывхарнине туйса тăраççĕ. Хут укçасене никам та илесшĕн мар, вĕсене юмăç карчăксем те ĕненмеççĕ. Сăмах май каласан, Геббельс пропаганда тăвас ĕçре нимĕçсем тĕшмĕше ĕненнипе мĕнле усă курма пултарнине часах тавçăрса илнĕ. Хальхи вăхăтра нимĕç халăхĕ хушшинче кăмпа пек йышланса кайнă юмăççăсемпе асаймĕççĕсем вăйлă ĕçлеççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ—нацистсен агенчĕсем. Нимĕçсене вĕсем—«фюрера куçнă Фридрих Великий чунĕ» Германие часах çăлĕ, тесе улталаççĕ. Германирен таварăннă çынсем каланă тăрăх, апат-çимĕç ыйтăвĕ унта çав тери çивĕчленсе кайнă. Карточкăпа илмелли çăкăршăн булочник патне çынсен темиçе хут та çӳреме лекет».

ВЫÇĂ ПИРКИ КЕНИГСБЕРГРА ПĂЛХАВСЕМ ПУÇЛАННĂ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Швецири «Стокгольмс-тиднинген» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, юлашки вăхăтра Кенигсберг хулинче апат-çимĕç парса тăрас ĕç çав тери япăхланса кайнă. Халăха çăкăр кунне 50 грамм кăна параççĕ, урăх нимĕнле апат-çимĕç те памаççĕ. Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, выçă пирки хулара пăлхавсем пуçланса кайнă.

ПААСИКИВИ КАЛАНИ

ГЕТЕБОРГ, мартăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). «Сюдсвенска дагбладет» хаçат Финлянди сеймне суйлани результачĕсем çинчен Хельсинки хулинчи хăйĕн корреспонденчĕ Паасикиви премьер-министрпа калаçнине пичетлесе кăларать.

Вырăссем енчен хĕсĕрлени пулнă-и, — ыйтнă Швеци корреспонденчĕ.—«Нимĕнле хĕсĕрлени те пулман, — ответленĕ Паасикиви. — Вырăссем суйлава хутшăнас шутпа нимĕн те каламан та туман та».

«Суйлавсем Крымри конференци каласа хăварнă пек пулса иртнĕ-и?»—ыйтнă корреспондент.—«Чăн та çапла иртнĕ, — ответленĕ Паасикиви. — Ман шутпа, сейм составĕ халь ăслă та тĕрĕс тулашри политика тытса пыма май парать». «Финляндире наци ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хăратакан лару-тăру аталанса пырать текен хăрушă хыпарсем пĕртте тĕрĕс марри çинчен эпĕ тепĕр хут çирĕплетсе калатăп. Пирĕн политика хамăрăн хĕвелтухăçĕнчи кӳршĕпе, çавăн пекех çурçĕрти тата хĕвеланăçĕнчи державăсемпе чи лайăх çыхăну тытас çулпа каймалла. Хамăр халăхăн пуласлăхĕ çине шанмасăр пăхма пирĕн нимĕнле сăлтав та çук».

ЧЕРЧИЛЛЬ ГОСПОЖА СССР-а КИЛСЕ КАЙМА ХАТĔРЛЕНЕТ

ЛОНДОН, мартăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Премьер-министр арăмĕ Черчилль госпожа, «Российăна пулăшмалли фонд» тунăскер, Совет Правительстви тата Хĕрлĕ Хĕреспе Хĕрлĕ Çурмăйăх обществи чĕннипе çывăхри кунсенче Совет Союзне килсе каймалла.

ПĔЛТЕРӲ

Паян, мартăн 24-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Пионерсен çуртĕнче чăвашсен илемлĕ литературин никĕсне хываканĕ К. В. Иванов вилнĕренпе 30 çул тултарнă май хулари партипе совет тата комсомол активĕн, литературăпа искусство тата пичет работникĕсен пухăвĕ пулать.

Пухура филологи наукисен кандидачĕ И. Н. Сутягин юлташ доклад туса парать.

Доклад хыççăн Чăвашсен академи театрĕн артисчĕсем «Нарспи» пьесăн уйрăм сценисене лартса параççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 0—23, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн 5—31, издательство конторин 2—55.

НТ 00297 Типография Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000